# *ЭХ, ÇĂВАРНИ, ÇĂВАРНИ…*

## *(уяв сценарийĕ)*

## Эх,çăварни,çăварни...

Тĕллевĕ: халăх йăли – йĕркисене аса илсе пурнăçа кĕртесси; хисеплеме вĕрентесси.

Уяв йĕрки

Уяв урамра пулса иртет. Хĕрсем çÿçеллĕ тутăрсем çыхнă, чăваш тумĕсемпе. Хитрелетнĕ катаччи лашисем тăраççĕ.

**1 ертÿçĕ:** Салам пурне те, хаклă ял-йышсем, вĕренекенсем, хăнасем.

Сарă кĕрĕк тăхăнса

Саркаланса тухар-и?

Çăварни çитрĕ çаврăнса,

Ай, катаччи чупар-и?

**2 ертÿçĕ:** Ырă йăла – йĕрке пурнăçа кĕрсе пыма пуçларĕ. Ĕлĕк пирĕн асатте-асаннесем вĕсене çирĕп тытса пынă. Кашни ĕç-пулăмĕн хăйĕн вăхăчĕ. Çут çанталăкăн та хăйĕн вăхăчĕ. Хĕллепе çу вăй виçеççĕ. Çак вăхăтра чăвашсем çăварни уявне ирттереççĕ.

**1 ертÿçĕ**: Çăварни тени тепĕр майлă „çу эрни”, „хĕле ăсатни”, „çуркуннене кĕтни”. Çăварни çурхи кун тăрăшшĕ çĕрпе танлашнă чухне пуçланать.

**2 ертÿçĕ:** Яш-кĕрĕм, хĕр-упраç Çĕнĕ çул иртсенех çăварние хатĕрленме тытăнать. Çăварние юрăпа – ташăпа хавассăн кĕтсе илнĕ.

**1 ертÿçĕ:** Эх, çăварни, çăварни...

Юрă- ташă кĕрлени

Çуркуннене чыслани.

Хĕле ĕççĕр хăварни!

**2 ертÿçĕ:** Асаттесен пилĕпе

Атте-анне ирĕкĕпе

Пурăнар-ха, тăвансем,

Асран кайми чăвашсем.

**1 ертӳçĕ:** Чăваш çăварни кунĕ хăй патне пыракан çынна: ача- пăча пулсан та, ватти пулсан та çуллă икерчĕ çитернĕ, сăра ĕçтернĕ.

**2 ертӳçĕ:** Çăварни эрнин малтанхи кунне чăвашсем „аслă çăварни”, юлашки кунне „кĕçĕн çăварни” тенĕ.

Çăварни, çăварни...

Паян кĕçĕн çăварни!

Пурте килĕр уява

Сивĕ хĕле ăсатма

Çуркуннепе савăнма.

**1 ертӳçĕ:** Паян пирĕн уявра

Пĕтĕм халăх хăнара.

Тăвайккинчен ярăнар,

Икерчине тутанар,

Чаплă тăвар уява,

Пĕрле вăйăсем выляр,

Çăварние ăсатар.

**3 ертӳçĕ:**

Катаччи те çăварни

Çăвар тулли икерчи,

Кĕсье тулли пĕремĕкĕ

Ма çăварни теес мар?

**4 ертӳçĕ:**

Çак çăварни мĕншĕн килет?

Сар хĕрсене савăнма

Хурисене,ай,хурланма,

Çыррисене çилленме.

**5ертӳçĕ**: Атьăр, хĕрсем – каччăсем

Выляма- суйлама

Халь выляса- кулнисем

Кайччăр ĕмĕр тăршшĕпе.

***<u>Çăварни карчăккипе старикки килеççĕ.</u>***

**Старик:** *(патаккипе шаккаса)*

Чир-чĕр кайтăр,

Сывлăх пултăр,

Турă патăр тивлетне

Ырлăх патăр, сывлăх патăр.

**Çăварни карчăкки:** Пӳлме тулли тырă пултăр,

Карта тулли выльăх пултăр.

Вĕлле тулли хурт кĕрлетĕр.

Сак çи тулли ывăл-хĕр лартăр.

**1 ертӳçĕ:** Асанне, мĕнле уяв вăл, Çăварни? Мĕн çĕннине каласа парăн-ши пире?

**Çăварни карчăкки**: Çăварни уявĕ ĕлĕкренпех пырать, мăнукăм. Çăварни эрнинчи кашни кунăн хăйĕн пĕлтерĕшĕ пур, мăнукăм:

тунтикун – тăвансем, тус-йышсем пĕр-пĕринпе тĕл пулнă, хĕвел питлĕ икерчĕпе чей ĕçнĕ

ытларикун – хуйхă-суйхă çинчен манса кайса вылянă, кулнă

**Çăварни старикки**:(сухалне шăлса) юнкунпа кĕçнерникун кашни килтех тутлă апат – çимĕç пĕçерсе çинĕ, тăвансем пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ.

**Çăварни карчăкки**: Çапла, эрнекун вара арçынсем хунямăшĕсене хăйсем патне хăнана чĕнсе икерчĕпе сăйланă. Шăматкун хĕр-пултăрсем пĕрле пухăнса икерчĕ, кукăль пĕçерсе çинĕ, юрăсем юрланă.

**Çăварни старикки:** Вырсарни кун-кĕçĕн Çăварни, ялĕпех хĕле ăсатнă, ача-пăча катаччи чупнă.

**Çăварни карчăкки**: Авалтан килекен йăлапа уява ача-пăча уçнă. Вĕсем йĕтĕн вăррине инçе-е-е ыватнă. Çапла сăмахсем каланă:

Йӳ-ӳ-ӳ кайтăр, чӳ-ӳ-ӳ кайтăр,

Çырма урлă каçсах кайтăр,

Йĕтĕн-кантăр вăрăм пултăр!

Кантăр вăрри тутă пултăр,

Çерçи ури шарт! хуçăлтăр!

Çи-пуçа çĕнĕ кĕпе йĕм пултăр,

Кĕпи пĕттĕр те пуçĕ юлтăр! ( инçе-инçе йĕтĕн вăррине ывăтса ярать)

Манăн йĕтĕн вăрри инçе-е кайрĕ, йĕтĕнĕ вă-ă-ă-рăм пулать.

**Çăварни старикки**: Тырри-пулли ăнса пултăр,

Хăмăлĕ хăмăш пек пултăр,

Тăрри чакан пек пултăр,

Пĕрчи пăрçа пек пултăр,

Тĕшши тутлăхлă пултăр!

**Çăварни карчăкки:** Çăварни юрă-ташăпа пуян пулнă. Çапла такмаксем калаттăмăр (кĕвĕпе ачасем такмаксем калаççĕ)

***<u>Çăварни такмакĕсем.(пĕр-пĕр класс ачисем) юрлаççĕ (6 класс)</u>***

1. Çăварни! Çăварни!

Паян кĕçĕн çăварни!

Пурте килĕр уява

Сивĕ хĕле ăсатма.

2. Эй, çăварни,çăварни,

Юрă-ташă кăларни.

Çуркуннене чыслани,

Хĕле ĕççĕр хăварни.

3. Эй, çăварни,çăварни,

Катăк çатма икерчи.

Çуллă çатма çимĕçне

Эрне хушши çитерни.

4. Паян пирĕн уявра

Пĕтĕм халăх хăнара.

Икерчине тутанар,

Сивĕ хĕле ăсатар.

5. Ватти-вĕтти савăнать,

Пĕтĕм чиртен сывалать .

Юрлар, ташлар, йăл!кулар,

Çуркуннене саламлар!

6. Çăварни çуни çунатлă,

Мĕншĕн çуна теес мар.

Ларса çăварни чупас мар,

Такмакласа ташлас мар!

7. Çăварни, çăварни,

Çăварни килчĕ, куртăр-и?

Хирĕç тухса илтĕр-и?

8. Çăварни, çăварни,

Çăварни килчĕ, куртăр-и?

Хĕл çăварĕ хупăнчĕ,

Çур çăварĕ уçăлчĕ.

9. Юрлар юррине,

Ташлар ташшине.

Çăварни пĕрре пулать,

Савăнса юлас пулать.

10. Асаттесен пилĕпе,

Атте-анне пехилпе

Пурăнар-ха, тăвансем,

Чăваш çĕрĕн ачисем!

Тăррăн-тăррăн тăмашкăн,
Тăри чĕппи мар эпир.
Шăппăн-шăппăн лармашкăн,
Шăпчăк чĕппи мар эпир.
Сикĕр-сикĕр шывалла,
Шыв сирпĕнсе тăмалла.
Ташлăр халĕ ташшине,
Çын тĕлĕнсе тăмалла.
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ,
Калама та çук ĕнтĕ,
Сылтăм ура хĕрсе кайрĕ,
Чарăнма та çук ĕнтĕ.
Юрататăп кĕпине,
Юрпататăп çухине,
Юрататăп каччине
Аван ташлаканнине.
Шурă тутăр паттис мар,
Паттисран та кая мар.
Эпир кунта артист мар,
Артистран та кая мар.
Сĕтел тăваткал пулать,
Ури тăваттă пулать.
Эпир кунта савăнни
Ĕмĕр асăнма юлать.

**Çăварни старикки:** Эх, чун савăнать. Юррисем тата еплерехчĕ!!!

**Çăварни юррисем янăраççĕ**

1.Сарпи «Çăварни юрри»

2.Çеçпĕл ансамбль «Çăварни юрри»

3.Эткер ушкăн – «Çăварни пĕр çăварни»

4. А.Уляндина – «Çăварни юрри»

5. Стас Владимиров «Çăварни юрри»

**1 ертÿçĕ**: Малалла вăйăсем выльăпăр.

1. Канат туртни
2. михĕсемпе çапăçни,
3. катаччи чупни

*(Пĕр çĕрте вăйăсем выляççĕ, тепĕр çĕрте икерчĕ пĕçереççĕ, юрă шăрантараççĕ...)*

*(Çăварни хуçисем уяври кашни çынна чĕн пушăтпа çаптараççĕ. Пурте пĕр-пĕринчен каçару ыйтаççĕ., ыталаса чуп тăваççĕ. Сылăх каçарттараççĕ.)*

**1 ертÿçĕ:** Халĕ чăн хумхануллă самант. Хĕле ăсатса улăмран тунă катемпие чĕртес пулать. *(Старикпе карчăк катемпие чĕртеççĕ).*

**2 ертÿçĕ:** çунакан кăвайт çине йăвача пăрахар. Пихампарсем тутă пулччăр.

**Пурте пĕрле** : Çăварни карчăкĕ! Тутлăхлă пул, чипер кай! Чир-чĕре ялтан илсе кай! Арсене вăй пар, хĕрсене сывлăх пар!

*(Катемпи тавра çаврăнса çăварние ăсатаççĕ)*